26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 МАРТ 30 ЫТЛАРИКУН 69(6306) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Подсобнăй хуçалăхсем çураки умĕн

Вăрçă вăхăтĕнче предприятисемпе артельсен, учреждениссен подсобнăй хуçалăхĕсем чылай саралчĕç, апат-çимĕç продукчĕсем туса илесси анлăланчĕ. Иртнĕ çул пирĕн республикăри предприятисен подсобнăй хуçалăхĕсем 4 пин гектара çити саралчĕç. Çав çĕр лаптăкĕ çинче акса предприятисен подсобнăй хуçалăхĕсем 13 пин центнер тĕрлĕрен тырпул, 22.860 центнер çĕрулми, 9.334 центнер пахча-çимĕç туса илчĕç. Ĕçе кирлĕ пек йĕркелесе пынă çĕрте подсобнăй хуçалăхсем пысăк тухăçлă пулчĕç. Тĕслĕхрен «Большевик» заводăн подсобнăй хуçалăхĕнче вăтам шутпа гектартан 128-шар центнер çĕрулми тата 295-шер центнер кишĕр туса илнĕ. Куславкка комбиначĕн подсобнăй хуçалăхĕнче те пысăк тухăçлă пахча-çимĕç туса илнĕ. Ку комбинатра ĕçлекен рабочисем общеcтвăллă столовăйсенче халĕ те хайсен подсобнăй хуçалăхĕнче туса илнĕ пахча-çимĕçсемпе апатланаççĕ. Кунсăр пуçне тата фронтовиксен çемьисене чылай пахча-çимĕç парса пулăшнă.

Пысăк тухăçлă пахча-çимĕç тата тырпул туса илесси подсобнăй хуçалăхра ĕçе вăхăтра тата йĕркеллĕн туса пынинчен килнĕ. Куславкка комбиначĕн подсобнăй хуçалăхĕ кăçал та çуракине тĕплĕн хатĕрленет. Вăрлăхсене тата çĕрĕç инвентарьне юсаса çитерчĕ. Лашасене усрамалли витесем туса хатĕрленĕ, подсобнăй хуçалăхра ĕçлекен рабочисем валли çуртсем лартаççĕ, калчасем ӳстерме парниксем хатĕр.

Анчах та хăшпĕр предприятисен руководителĕсем хăйсен подсобнăй хуçалăхĕсемпе кирлĕ таран интересленмеççĕ-ха.

Подсобнăй хуçалăхра пысăк тухăçлă пахча-çимĕç туса илни рабочисемпе служащисене нумай пулăшать, предприятисемпе учреждениссенче лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлеме май парать. Çак чăнлăха тĕплĕн ăнланман руководительсене пула уйрăм предприятисен подсобнăй хуçалăхĕсенче иртнĕ çул çуракине кая юлса турĕç, япăх вăрлăхсем акрĕç, агротехника правилисене пурнăçламарĕç. Каплин юлташ ОРС начальникĕ пулса ĕçлекен заводăн подсобнăй хуçалăхĕнче, тĕслĕхрен, иртнĕ çул гектартан пăрса пĕрер центнер, çĕрулми 60 центнер, хĕрлĕ кăшман 26 центнер çеç тухнă.

Çакăн пек ĕçе ответлăха туйма-сăр тунине хыттăн сивлемелле. Предприятисен подсобнăй хуçалăхĕсене государство машинăсем, удобренисем парса пулăшать, çĕр уйăрса парать, укçа-тенкĕ парать. Çакăн хыççăн ĕнтĕ япăх ĕçлесе çĕре ахаль сая янине пачах чăтма çук. Государство пулăшни çине нумай тырпул, нумай пахча-çимĕç туса илнипе ответлемелле,—çакă вăл предприятисен директорĕсемпе ОРС начальникĕсен чыслă обязанноçĕ.

Тухăçлă пахча-çимĕçпе тырпул никĕсне çуркунне хываççĕ. Çĕр уйăрса илмелле, вăрлăх хатĕрлемелле, ĕç инвентарьне юсамалла, агротехника мероприятийĕсене тĕплĕн пурнăçламалла,—çакăн пек ĕнтĕ халь подсобнăй хуçалăх руководителĕсен ĕçĕ. Чылай подсобнăй хуçалăхсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе халĕ питех те вăрахăн çавăрăнкалаççĕ. Трофимов юлташ ОРС начальникĕ пулса ĕçлекен завод, тĕслĕхрен, кăçал 200 гектар акса хăварма йышăннă. Паянхи куна заводăн подсобнăй хуçалăхне валли 92 гектар çеç çирĕплетсе панă. Ытти çĕре ОРС колхозсене тупма шутлать. Анчах колхозсемпе договорсем тума тытăнман-ха. Ытти хăшпĕр предприятисен те ĕç çавăн пекех вырăнтан хускални сисĕнмест.

Çураки пуçланас кунсем çывхарса килчĕç. Вăрлăх хатĕрлес, ялхуçалăх машинисене юсас, тислĕк, минераллă удобренисем хатĕрлес ĕçсене халех тумалла. Подсобнăй хуçалăхсем çуракине тĕплĕн хатĕрленсе, ăнăçлăн туса ирттерессишĕн ОРС начальникĕсем çеç мар, предприятисен руководителĕсем те тата заводсемпе фабрикăсенчи партипе профсоюз организацийĕсем те ответлă. Вĕсен подсобнăй хуçалăх çуракине мĕнле хатĕрленнине куллен тĕрĕслесе тăмалла, çак ĕçе ертсе пымалла.

Подсобнăй хуçалăх предприятиĕсенче пысăк вырăн йышăнса тăрать. Тылри боецсене ялхуçалăх продукчĕсем кирлĕ таран парса тăни фронта пулăшнипех пулать, рабочисемпе служащисене хăйсен пĕтĕм вăйне фронта пулăшнă çĕре хурса ĕçлеме май парать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 27-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 27-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Мартăн 26-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕтсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 7 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем уйрăм участоксенче хăйсен позицийĕсене лайăхлатасшăн çапăçнă. Пĕр чаçăн боецĕсем минăсем хурса тата пралук карса тухнă вырăнсем урлă каçса халăх пурăнакан икĕ пункта тытса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче нимĕçсен 200 салтакпа офицер ытла вилнĕ. Пирĕннисем трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Белгород районĕнчи пĕр участокра тăшман пысăк çухатусем тӳссе пирĕн войскăсем хушшине сăвăлланса кĕнĕ. Вăйлăн контратака туса нимĕçсене хăйсен малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Çав çапăçура нимĕç пехотине икĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă, 2 танк тата хăй тĕллĕн çӳрекен пĕр орудие персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Çурçĕр Донецăн вăтам районенче тăшманăн пĕр батальон пехоти, артиллерирен вăйлăн персе тăрса пулăшнипе, Красков юлташ командир пулса тăракан подразделение икĕ хут атакăланă. Пирĕн боецсем гитлеровецсен атакисене сирсе янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 вилли ытла выртса юлнă. Тепĕр участокра пĕр чаçăн разведчикĕсем тăшманăн траншейисене кĕрсе кайнă та 40 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ильмень кӳллинчен кăнтăртарахра пирĕн чаçсем хăйсем йышăннă рубежсене çирĕплетнĕ тата разведка тунă. Сержант Платонов ертсе пыракан 13 боец тăшманăн позицийĕсем патне шуса пынă та гитлеровецсене сасартăк атакăланă. Сержант Платонов нимĕç офицерне вĕлерсен, 12 нимĕç салтакĕ тыткăна паранна. Пирĕн разведчиксем çĕнĕ рубежа йышăнса илсе, ăна подкреплени пырса çитиччен хăйсен аллинче тытса тăнă.

Снайпер Номоконов юлташ вăрçă пуçланнăранпа 263 гитлеровеца вĕлернĕ, унăн ученикĕ Миронов юлташ 126 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Кубань таврашĕнче виçе кун хушшинче пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 34 самолетне персе ӳкернĕ, 8 самолетне персе сиенленĕ. Совет штурмовикĕсемпе бомбардировщикĕсем тăшманăн аэродромне ăнăçлăн тапăннă. Бомбăсем пăрахса тата тупăсемпе пулеметсенчен персе, нимĕçсен нумай самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Гитлеровецсен карательнăй экспедицийĕ Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен «За родину» ятлă отрядне çавăрса илсе пĕтерсе тăкасшăн пулнă. Нимĕçсем, партизансене улталас тесе, вĕсене хирĕç хăйсен пĕр подразделенине янă. Карательсен тĕп вăйĕсем çав вăхăтра вара партизансене тылран пырса çавăрса илсе пĕтерсе тăкмалла пулнă. Партизансен разведки тăшманăн шухăшне вăхăтра пĕлнĕ. Отряд командирĕ партизансен пĕр ушкăнне нимĕç подразделенийĕпе çапăçма хушнă. Отрядри ытти боецсем командирпа пĕрле вăрманта карательнăй экспедици пымалли çул хĕрринче засада тунă. Партизансене çавăрса илме тăрăшса, гитлеровецсем хăйсем ункă ăшне кĕрсе ӳкнĕ. Совет патриочĕсем 94 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, иккĕшне тыткăна илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсем шутĕнче автоматлă оруди, 9 пулемет, 6 миномет, 50 винтовка, 2 автомат, 450 мина. апат-çимĕç тиенĕ 54 лав пур.

* * *

Аяларахра нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Смоленск облаçĕнчи Гаврилки ялĕнче мирлĕ халăха тискеррĕн асаплантарни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр. «Нимĕçсем хăйсем каяллла чакас умĕн Гаврилки ялне Кузнецово, Никулинки тата ытти ялсенчи çынсене пуçтарнă та вĕсене темиçе çурта хăваласа кĕртнĕ. Нимĕç бандичĕсем вара çав яла вут тĕртнĕ. Хăшпĕр çынсем тарса çăлăнма хăтланнă. Вĕсем вут хыпса илнĕ çуртсенчен урама чупа-чупа тухнă. Çывăхра тăнă нимĕçсем тарса хăтăлма хăтланнă çынсене автоматсемпе пере-пере вĕлернĕ.

Вутра 100 çын ытла çунса кайнă, вĕсем хушшинче хĕрарăмсемпе ачасем нумай пулнă. Пырса çитнĕ Хĕрлĕ Çар чаçĕсем хăшпĕр совет гражданĕсене хăрушă вилĕмрен хăтарма ĕлкĕрнĕ». Акт çине ял çыннисем А. Бритвин, Т. Медышкова, О. Свистова, Г. Котов, М. Семенов, А. Котова, А. Лобанова, М. Жаворонкова алă пуснă.

Мартăн 28-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 28-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Иртнĕ эрнере, мартăн 21-мĕшĕпе 27-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче тата тăшманăн аэродромĕсенче нимĕçсен 251 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 95 самолет пĕтнĕ.

* * *

Мартăн 27-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 5 танкĕнчен кая мар тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, 2 чутунçул составне аркатса тăкнă, артиллерипе миномётсен 11 батарейине пусарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем уйрăм участоксенче вырăнти çапăçусем туса пынă. Пĕр соединенин чаçĕсем нимĕçсенчен вăрман участокне тасатнă, çав участокшăн пынă çапăçура тăшманăн пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. 2 оруди, 6 пулемет, 3 противотанковăй пăшал, боеприпассен складне тата радиостанци тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделени гитлеровецсене тĕреклĕ позицирен хĕссе кăларнă вăхăтра нимĕçсен 100 ытла салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Чутуевран çурçĕререхре пирĕн подразделенисем Çурçĕр Донецăн сулахай енне каçма хăтланнă тăшман ротине пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра нимĕçсем пирĕн пĕр часть вырнаçнă çĕре шăтарса кĕрсе ял тулашне тытса илнĕ. Тăтăклăн контратака туса, пирĕн боецсем тăшмана çав ялтан хĕссе кăларнă та хăйсен позицийĕсене каяллла тытса илнĕ. Çавăнта 300 гитлеровеца вĕлернĕ тата тăшманăн пĕр танкĕпе хăй тĕллĕн куçакан туппине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белгород районĕнче тĕрлĕ участоксенче тăшман разведка тума хăтланнă. Пирĕн подразделенисем çапăçусенче 200 çити нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн 2 бронемашинине персе ӳкернĕ.

* * *

Волынь облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ оккупантсемпе çапăçса 80 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Партизансем нимĕçсенчен боеприпассем тиенĕ темиçе лав, 5 пулемет тата 60 винтовка тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 13-мĕш пехотнăй корпусĕн штабĕн разведка пайĕнче ĕçлекен старши тăлмач — лейтенант Отто Зинскер, тыткăна лекнĕскер, çапла каласа панă: «Пирĕн корпуса хирĕç тăракан вырăс чаçĕсен çухатăвĕсем çинчен эпир уйăхра икĕ хут сводка параттăмăр. Халĕ аса илме те намăс тата кулăшла: вăл сводкăсенче 10 процент чăнлăх пулнă пулсан та, вăрçă тахçанах пĕтнĕ пулĕччĕ. Кирек епле донесени панă чухне те кашни офицер е генерал Гитлера килĕшмен е аван пулас çук вырăнсене кăлара-кăлара пăрахнă. Кăм та кăм урăхла хăтланнă, вăл хăйĕн ĕнсине хуçнă. Эпир хамăра хамăр улталанă, çавăншăн пысăк наказани куртăмăр. Вырăссем пирĕн оборона линине татса кĕнĕ. Корпус штабĕн юлашкийĕсем тата çухалса кайнă салтаксем хĕбеланăçнелле тухма хăтланчĕç. Штабра 200 автомашина пулнă, вĕсене пăрахса хăварма тиврĕ. Пуртĕ çурран утрĕç. Эпĕ яла кĕтĕм те тыткăна парăнтăм».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Курск облаçĕнчи Ивница ялĕнче калама çук тискер ĕçсем тунă. Каяллла чакас умĕн гитлеровецсем хăйсемпе пĕрле пĕтĕм халăха илсе кайма хăтланнă. Çынсем нумайĕшĕ пытанса пĕтнĕ. Вара нимĕçсем яла вут тĕртнĕ те мирлĕ халăха хăваласа тытма пуçланă. Арçынсене, хĕрарăмсене тата ачасене салтаксем нӳхрепсенчен сĕтĕре-сĕтĕре кăларнă. Нимĕçсем Антонина Димитриева колхозницăпа унăн 10 çулхи хĕрачине, Людмила Кухтина колхозницăпа унăн виçĕ пĕчĕк ачине, Надежда Кирченкова учительницăна тата унăн хĕрне, Лидия Абросимова учительницăпа унăн 3 çулхи ывăлне тата ыттисене те çунтарса янă. Ял çыннисене ыттисене нумайĕшне нимĕç бандичĕсем хăйсемпе пĕрле хăваласа кайнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

ГИТЛЕРЛА СУЕÇĔСЕМ ЛĂПЛАНМАÇÇĔ

Çурçĕр Донецпа Днепр хушшинчи пирĕн войскăсен çухатăвĕсем çинчен нимĕçсен суя элекне Совет Информаци Бюровĕ тăрă шыв çине кăларнăччĕ. Анчах гитлерла суеçĕсем лăпланасшăн мар. Пĕрре пичетлесе кăларнă суя элек гитлеровецсене сахал пек туйăннă, вĕсем вара çавăн пекех ухмахла лăпăртатса çĕнĕ суя элек çырса кăларнă. Мартăн 24-мĕшĕнче Германи информаци бюровĕ совет войскисем юлашки 8 эрне хушшинче Орел районĕнче тунă çухатусем çинчен пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Ку хутĕнче гитлеровецсем «41 стрелковăй дивизи, 11 стрелковăй тата 18 танковăй бригадăна пĕтерни çинчен е çав тери пысăк çухатусем тӳсни çинчен» пĕлтернĕ. Çавăн чухлĕ войскă Орел районĕнче пирĕн пулман та, халĕ те çук. Çав районра пирĕн çавăн чухлĕ войскă пулнă пулсан, нимĕç войскисенчен нимĕн те тăрса юлман пулнă пулĕччĕ.

Паллă, гитлерла пропаганда нихăçан та тăнлă пропаганда пулман, картран тухса суйнипе вăл час-часах йывăр положение кĕрсе ӳкнĕ. Анчах нимĕçсен фашистла войскисем Сталинград патĕнче тӳснĕ поражени хыççăн гитлерла пропаганда тата ытларах ухмахланса кайса пусĕпех йĕркерен тухнă. Гитлеровецсем хăйсен юлашки пĕлтерĕвĕсенче тискер аташни çакăн çинчен питĕ лайăх каласа парать.

Чăнах та, 1943 çулхи мартăн 20-мĕшĕнче нимĕçсем, Çурçĕр Донецпа Днепр хушшинчи районра хăйсен çитĕнĕвĕсене çав тери ӳстерсе кăтартса, советсен вуншар дивизийĕсемпе бригадисене аркатса тăкни çинчен пĕлтерчĕç. Тăватă кун иртсен, мартăн 24-мĕшĕнче, Хĕрлĕ Çарăн çав пĕтерсе тăкнă тенĕ соединенийĕсене, сăмахран, 193-мĕш стрелковăй дивизие, йĕлтĕрçĕсен 9-мĕш бригадине тата ыттисене те, гитлеровецсем тепĕр хут пĕтерни çинчен пĕлтереççĕ. Анчах ку ĕçра Çурçĕр Донецпа Днепр хушшинчи районра мар, Орел районĕнче пĕтерсе тăкнă иккен.

Гитлерла каппайчăксене ĕненсен çапла пулса тухать: фронтăн икĕ участокĕнче кăна — Çурçĕр Донецпа Днепр хушшинче февралĕн 13-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче тата Орел районĕнче 8 эрне хушшинче Хĕрлĕ Çар 160 дивизипе бригада çухатнă пулать. Ытăс килет, камха апла пулсан Курскпа Орел районĕнче, Вязьмăпа Ярцево районĕнче, Брянскпа Старая Русса районĕнче нимĕçсен фашистла войскисене çĕмĕрсе, пĕтерсе пырать? Мĕншĕнха тата нимĕçсен хăйсен фронтне кĕскетмелле пулнă? Ырă пурнăçран мар ĕнтĕ нимĕçсем фронт линине кĕскетнĕ. Нимĕçсен информаци бюровĕнчи суеçĕсем ытларах тăрăшнипе хăйсен хуçисене ухмаха тăратса хăварни паллах. Вĕсем çинчен калама пулать: ухмаха кĕл тума хушсан вăл çамкине те çапса çурать.

Орел районĕнчи чăн-чăн лару-тăрăва илсен, çаксене палăртма кирлĕ. Январь уйăхĕн вĕçĕнче пирĕн войскăсем, фронтăн çав участокĕнче кĕрешекенскерсем, чылай вырăнсенче нимĕçсен оборона линине татса кĕнĕ те чылай пысăк территори тытса илнĕ.

Çавăнта пулнă çапăçусенче совет войскисем нимĕçсен 20.000 салтакĕпе офицерĕсенчен кая мар пĕтерсе тăкнă, тăшман техникине нумай аркатнă, трофейăсем тытса илнĕ тата 5.000 çынна тыткăна илнĕ. Çав вăхăт хушшинчех пирĕн войскăсем, вилнисемпе аманнисене шутласан, 8.620 çын çухатнă.

Март уйăхĕн çуррине нимĕçсем Орел районĕнче, çухатнă позицийĕсене каялла тытса илес тесе, контрнаступлени пуçласа ячĕç. Анчах пĕр участокра та ăнăçу тăваймарĕç, çĕнĕрен нумай çухатусем тӳсрĕç.

Жиздрыран çурçĕртерехре, пĕр çав районра кăна, мартăн 19-мĕшĕпе 23-мĕшĕ хушшинче, 4 кун хушши пынă çапăçура кăна нимĕçсем 140 танк, 72 оруди, 202 пулемет, 137 миномет тата, вилнисене кăна шутласан та, 8.000 салтакпа офицер çухатнă.

Нимĕçсем Сталинградшăн çапăçу хирĕнче таварма пултарайман пирки халĕ вĕсем хут çинче таварма хытă тăрăшаççĕ. Гитлерла суеçĕсем пĕтерсе тăкнă тесе пĕлтерекен совет дивизийĕсемпе бригадисем халĕ те кĕрешеççĕ. Совет çĕрне нимĕç сволочĕсенчен пĕтĕмпех ирĕке кăларичченех вĕсем нимĕç захватчикĕсене аркатса пырĕç.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕнче

Политикăллă çутĕç учрежденийĕсем çураки вăхăтĕнче халăха пулăшас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе тата çураки вăхăтĕнче вĕсен ĕçне лайăхлатас тесе, ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ апрелĕн 1-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсем çуракине хатĕрленсе çитнине тĕрĕслемелли вулăкунлăх туса ирттерме йышăнна.

ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ тĕрĕслӳ вăхăтĕнче ВЛКСМ райкомĕсене çакăн пек ĕçсем туса ирттерме хушнă:

1. Колхоз клубĕсемпе вулав çурчĕсем çумĕнче аслăрах классенче вĕренекен ачасенчен тата вырăнти интеллигентсенчен советсем организацилемелле, çав совет членĕсене уйхир бригадисем çумне çирĕплетмелле.

2. Вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсенче лозунгсемпе плакатсем çакмалла.

3. Докладсем, каласусем, художествăллă пултарулăх вечерĕсем ирттерме календарлă план туса хатĕрлемелле.

4. Колхоз клубĕсенче, вулав çурчĕсенче, библиотекăсенче хаçат витринисем тата Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисене паракан льготăсемпе пулăшусем çинчен калакан кĕнекесемпе ытти справкăллă материалсен выставкисене организацилемелле.

ВЛКСМ райкомĕсен çак тĕрĕслеве ирттерме чи лайăх комсомолецсене, учительсене, агрономсене, аслăрах классенче вĕренекен ачасене хутшăнтармалла.

Профсоюзсемпе комсомолăн 1943 çулхи йĕлтĕрлĕ кросĕн итогĕсем

Профсоюзсемпе комсомолăн Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пулса иртнĕ йĕлтĕрлĕ кросне 5 миллион та 468 пин те 735 çын хутшăннă.

ВЦСПС çумĕнчи Тĕп оргкомитет тата ВЛКСМ Центральный Комитечĕ ăмăртура чи лайăх результат Мускав, Свердловск, Киров, Ленинград, Горький облаçĕсем, Хабаровск крайĕ тата Удмуртпа Чăваш АССР-ĕсем кăтартнă тесе палăрнă.

Профсоюзсемпе комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросĕнче чи лайăх çитĕнӳсем тунăшăн Мускав, Свердловск, Киров облаçĕсенчи тата Чăваш АССР-ĕнчи комсомол организацийĕсене ЦК ВЛКСМ-ăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕсене памалла тунă. Ленинград, Хабаровск, Горький, Омск облаçĕсенчи тата Удмурт АССР-ĕнчи комсомол организацийĕсене ЦК ВЛКСМ грамотисене парса наградăланă.

Кроса активлăн хутшăннăшăн ВЦСПС куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавсемпе: авиаци промышленноçĕнчи рабочисен союзĕн «Крылья Советов» спорт обществине, Хĕвелтухăçпе Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи чугунçул рабочийĕсен Союзĕн «Локомотив Востока» спорт обществине т. ыт. те наградăланă. (ТАСС).

А. М. Горький юбилейĕ

В. И. Ленин ячĕпе хисепленекен СССР государство библиотекинче А. М. Горький çуралнăранпа 75 çул тултарнă ятпа вырăссен аслă писателĕн кĕнекисен выставки уçăлнă. Совет влаçĕ пулнăранпа А. М. Горький произведенийĕсене Совет Союзĕнчи халăхсен 65 чĕлхипе кăларнă. Кĕнекесен тиражĕ 41,5 миллион экземпляр шутланать.

Юбилей кунĕсенче А. М. Горький пурнăçĕпе творчестви тĕлĕшпе вечерсем пулса иртеççĕ. Государствăн литература музейне аслă писатель-патриот çинчен лекцисем вуласа пама столицăри çар чаçĕсенчен, госпитальсенчен, предприятисенчен 300 заявка ытла панă. (ТАСС).

Пĕтĕм Союзри вĕренӳллĕ тренировка сборĕ

Ишес енĕпе СССР-та кам малта тăнине палăртасси

Мускава Пĕтĕм Союзри вĕренӳллĕ тренировка сборне çĕршыври тĕрлĕ хуласенчен тата Хĕрлĕ Çарăн тĕрлĕ чаçĕсенчен ишес ĕçĕн чи паллă мастерĕсем пырса çитнĕ.

Пĕтĕм Союзри сбор апрелĕн 1-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче пулса иртмелле. Вăл вара ишессипе шыва сикесси енчен СССР-та кам малта тăнине палăртнипе вĕçленмелле.

Совет Союзĕн чемпионĕ ятне илессишĕн розыгрыша спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕсем: Алешина, Мешков, Бойченко, Кигаев, Шумин, Гайновой тата чемпионсемпе рекордменсем хутшăнаççĕ. (ТАСС).

Художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленер

Ялсенчи çамрăксен пултарулăхне ӳстерес тесе тата ялти халăх хушшинчи культурăллă ĕçе лайăхлатас тесе, ВКП(б) Обком бюровĕн решенийĕ тăрăх, 1943 çулхи июнĕн 15-мĕшĕччен республикăри пур районсенче те ялсенчи çамрăксен художествăллă пултарулăх смотрĕ пулса иртет. Смотра драма, хор тата музыка тĕлĕшпе ĕçлекен чи лайăх кружоксем хутшăнма тивĕçлĕ. Çавăн пекех пĕчченшерĕн юрлакансем, калавçăсем, купăсçăсем художниксем т. ыт. те хутшăнаççĕ. Районсенчи художествăллă пултарулăх смотрĕсене ертсе пыма ВКП(б) райкомĕсен пропаганда отделĕсене хушнă.

Финанс ĕçĕнчи отличниксем

Республика 1942 çулта финанс планне ăнăçлăн тултарчĕ. Çак ĕçре отличниксемпе ударниксем чылай ӳссе çитĕнчĕç. Укçа-тенкĕ пухас ĕçе активлăн тата пуçаруллăн туса пынăшăн, социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн СССР Финанс Халăх Комиссарĕ Зверев юлташ пирĕн республикăри финанс работникĕсене 13 çынна «Отличник финансовой работы» значокпа наградăланă тата уйăхри ĕç укçипе премиленĕ.

Вăрнар райфинотделĕн старши инспекторĕ Е. С. Афанасьев, ЧАССР Наркомфинĕн работникĕсем А. Г. Бородин, А. И. Ланcков, Куславкка райфо инспекторĕ Г. Ф. Герасимов, Шăхасан райфинотделĕн налог инспекторĕ К. Д. Данилов, Чкаловски райфо заведующийĕ З. Н. Игнатьев, Етĕрне райфо заведующийĕ Ф. А. Кочергина, Улатăр хулинчи финотделăн главнăй бухгалтерĕ Е. В. Кулишова, Кувакино райфинотделĕн налог агенчĕ Л. И. Мальцев, Етĕрне райфинотделĕн налог агенчĕ Г. А. Миронов, Сĕнтĕрвăрри райфо Г. Н. Пегова, Госстрахăн республикăри управленин оперативнăй отдел начальникĕ К. Г. Савельев тата Çĕрпӳ Райфо заведующийĕ пулнă Н. А. Яснопольский юлташсем финанс ĕçĕнчи отличник значокне илме тивĕçлĕ пулнă.

Мартăн 27-мĕшĕнче наградăланă юлташсене Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ Золотников юлташ значоксем пачĕ.

ÇУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНСЕ КĔТСЕ ИЛЕР

Çуракине хатĕрленсе çитнĕ

ТАВАЙ. («Чăваш Коммуни» корр.). Ураскассинчи «Ĕçлĕх çулĕ» колхоз вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитрĕ.

Иртнĕ çулта колхоз агротехникăллă мероприятисене тĕрĕс пурнăçласа пынипе пула вăйлă тырпул туса илнĕ. Кăçалхи çул колхоз тата та вăйлăрах тырпул туса илес тĕлĕшпе Çĕнĕ Çырмари Молотов ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлет. «Ĕçлĕх çулĕ» колхоз членĕсем гектартан 100-шер пăтран кая мар тыră туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Вĕсен вăрлăхсем хатĕр. 60 центнер пăрçана, 15 центнер ясмăка колхозниксем алăпа пĕрчĕн суйласа тасатнă.

Колхоз тимĕрçи Е. Иванов юлташ колхозăн ялхуçалăх машинисене пурне те тахçанах юсаса лартнă. Вăлах Молотов ячĕпе тăракан колхозăн машинисене те юсарĕ.

Колхоз вырăнти удобренисене чылай пухса хатĕрленĕ. Уя 2.000 лав ытла тислĕк кăларнă, 23 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 135 центнер кĕл, 28 центнер фекали пухса хатĕрлснĕ.

Колхозниксем партипе совет тата колхоз активĕн республикăри канашлăвĕ чĕнсе каланине сўтсе-явнă. Çакăн хыççăн вĕсем хăйсем умне гектартан 18-шар центнер тыră туса илес задачăна лартнă. Çуракине тĕплĕн хатĕрленсе тухса, вĕсем çурхи тырăсене кăçал 8 талăк хушшинче акса хăварма пулчĕç.

В. Веселов.

Ялхуçалăх машинисене халех юсамалла

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). МТС тракторсене юсас ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартрĕ. Тракторсене пурне те юсанă, вĕсем çуракине тухма хатĕр тăраççĕ. Анчах ялхуçалăх машинисене юсас ĕç халĕ те кая юлса пырать-ха. Мартăн 23-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 4 плут, 2 сеялка тата 2 культиватор çеç юсанă.

Ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе уйрăмах 8-мĕш, 9-мĕш, 12-мĕш бригадăсем юлса пыраççĕ. 12-мĕш номерлĕ бригадăра, тĕслĕхрен, 4 плугран 3-шĕ халĕ те юр айĕнче лараççĕ, вĕсене юсама тытăнман. Сеялкăн шестерни çук, культиватор та юсавлă мар. 13-мĕш номерлĕ бригадăра та çавăн пекех. Тăватă плугран иккĕшне çеç юсанă, сеялкăна юсама тытăнман. Унăн винтисем тухса ўксе пĕтнĕ.

МТС дирекцийĕпе политотделĕн ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе ĕçе халех лайăхлатса ямалла.

Колхоз бригадирĕ

Ана колхоз председателĕ правление чĕнсе илнĕ те каланă:

— Сана хăвăрăн бригадăри колхозниксем бригадира лартасшăн...

— Темле-çке. Вăл ĕçре ĕçлемен çынна йывăр пуль.

— Хамăр пулăшатпăр. Хăнăхса çитетĕн.

Ку ĕç çулталăк каялла, Мăн Пакăшри (Советски район) «Красный партизан» колхозра пулнă. Анна Макарова пурнăçра чи пирвайхи хут çынсене ĕçре ертсе пыма тытăнать. Кашни кунхи практика тата малта пыракансен опычĕсемпе усă курса ĕçлени унăн пĕлўлĕхне ўстерсе пыраççĕ.

Фронт ялхуçалăх умне пысăк задачăсем лартнă. Аслă çулпуç çулталăк ытла каялла колхозниксене, тăван çĕршывпа фронта ытларах та ытларах тырпул, аш-какай, промышленноçа чĕртавар парса тăма чĕнни халĕ та асрах-ха. Çак патриотла шухăш-кăмăла Анна Макарова нихăçан та асран яман. Чăнах та, вăл ĕçе тытăннă чухне сахал мар йывăрлăхсем пулнă. Ĕçленĕ, çывăрмасăр ĕçленĕ Макарова, — вăра йывăрлăхсем хăйсемех каялла чакнă. Тимлĕн ĕçленине пула Макарова юлташ пĕлтĕр çуракине лайăх хатĕрленчĕ. Колхозри вăтăсемпе хĕрарăмсем тата ун пекех çамрăк хĕрсем тырра-пулла лайăх акса хăварчĕç. Макарова уборка ĕçĕсене те лайăх ертсе пычĕ, бригада районра малти рете тухрĕ. Авăн çапасси те кая юлмарĕ. Тырпул туса илмелли плана пурнăçларĕç, пăри гектартан 18 центнер тухрĕ,—акă вăл паха итог! Тăван ялне курма килсен Совет Союзĕн Геройĕ Федот Никитич Орлов та уншăн мухтарĕ. Анна Макарова умĕнче халĕ татах пысăк шухăш: малтанхинчен лайăхрах ĕçлемелле.

Тĕрĕс. Малтанхинчен лайăхрах ĕçлемелле. Унăн бригадинчи колхозниксем вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ырми-канми ĕçлерĕç. Бригада участокĕсем çине акма 79 центнер таса та сортлă вăрлăх хатĕрлерĕ.

Колхозри тимĕрçĕ лаççи машинăсемпе инвентарьсене юсаса çитерчĕ. 7 плут пур, сўресемпе урапасем çителĕклĕ, 16 комплект ут таврашĕсем юсанă. «Вĕсемпе паян тесен паянах акана тухма пулать», — тесе каласа парать Макарова юлташ.

Çанталăк çуркунне еннелле сулăнчĕ. Çуракине тухасси инçе юлмарĕ. Халĕ Макарова юлташ хăйĕн бригади çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тунă ĕçсен итогĕсене тăвать. Акă вĕсем: уя 1.125 лав тислĕк кăларнă. 18 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 20 центнер кĕл хатĕрленĕ, юр тытнă. Тумаллисем татах та пур, анчах вĕсене тăваççĕ. Халĕ клевер вăрлăхне хатĕрлесе çитерчĕç.

Анна Макарова бригади халĕ районра малта пыракансенчен пĕри шутланать. Унăн ĕçне Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ хăйĕн Хисеплĕ грамотине парса пахаларĕ.

Яков Ухсай.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

КОММУНИСТСЕМ—ÇУРАКИНЕ ХАТĔРЛЕНЕС ĔÇĔН ОРГАНИЗАТОРĔСЕМ

КŸКЕÇ. Партин Самуккассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш организацийĕ кăçалхи вăйлă тырпулшăн большевикла кĕрешет.

Парторганизаци секретарĕ, вăлах колхоз председателĕ Петрова юлташ ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ чĕнсе калани çинчен, пирĕн республика Мари АСС Республикине ăмăртăва чĕнсе илнĕ обязательствăсем çинчен колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса панă, çав обязательствăсене пурнăçлама мобилизациленĕ. Ку ыйтупа ятарласа колхозниксен пухăвне ирттернĕ.

Петрова юлташ çуракине хатĕрленес ĕçе конкретно ертсе пырать. Колхоз халĕ çуракине тухма пур енĕпе те хатĕрленсе çитнĕ: вăрлăхсене пĕтĕмпех тасатнă, ялхуçалăх машинисене юсанă, çураки вăхăтĕнче валли фураж хатĕрленĕ, пĕрлешсе апатланассине организацилеме продуктсем çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хунă.

Кашни бригадăрах агитаторсем уйăрнă. Çураки вăхăтĕнчи агитациллĕ-массăллă ĕçĕн планне туса çирĕплетнĕ.

Колхоз хĕл вăхăтĕнчи агротехникăллă мероприятисене пурнăçланă. Уя 700 тонна тислĕк кăларнă, 50 центнер минераллă удобренисем кўрсе килнĕ, 20 центнер кĕл, 25 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз çуракине 6 ĕçкунĕ хушшинче ирттерессишĕн кĕрешет.

Çавăн пекех партин Шĕнерпуçĕнчи, Заводской ялсоветĕнчи пуçламĕш организацийĕсем те çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. Унти коммунистсем колхоз производствин тĕрлĕ участокĕнче ĕçлесе ыттисене пример кăтартаççĕ. «Молния», «Кормилец», «Осоавиахим» «Красный флот» колхозсем халĕ çуракине мĕнле хатĕрленнине тепĕр хут тĕрĕслесе тухрĕç. Лаша кўлмелли хатĕрсем, транспорт инвентарĕсем юсавлă. Вăйсăр лашасене вăйлă апат çине тăратнă. Çураки ирттермелли ĕç планĕсене тунă.

Анчах Альгешри, Иккассинчи парторганизацисем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе сўрĕккĕн ĕçлеççĕ-ха. Çавна пула унти колхозсем халĕ те çуракине хатĕрленсе çитмен.

Партин районри организацийĕ умĕнче çуракине лайăх хатĕрленсе ăна ăнăçлăн, 8—10 кун хушшинче ирттерес задача тăрать.

В. Караушев,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Выляса илмелли вкладсем хывăр

Çĕршыв оборонине тĕреклетме укçа-тенкĕ çителĕклĕ парса тăрас ĕçре халăхăн перекетленĕ укçине перекет кассисене хывни чылай паллă вырăн йышăнса тăрать.

Пирĕн республикăра кăна вăрçă пуçланнăранпа перекет кассисене 6 миллион тенкĕ ытла укçа хывнă.

Ĕçхалăхĕн интересĕсене шута илсе 1942 çулта перекет кассисенче çĕнĕ вкладсем—выляса илмелли вкладсем йышăнмалла тунă.

Выляса илмелли вкладсене мĕнпур перекет кассисем йышăнаççĕ. Кашни çын пĕр е темиçе сберкассăра темиçе счет уçса 5 тенкĕрен пуçласа 10.000 тенке çити укçа хывма, çав вкладсем тăрăх выляса илме пултарать.

Выляса илмелли вкладсем хывнă çынсем перекет кассисем вкладчиксене паракан мĕнпур правăсемпе усă кураççĕ. Кашни вкладчик хывнă укçа çумне хуть хăш вăхăтра та çĕнĕрен укçа хушса хывма, укçан пĕр пайне е пĕтĕмĕшпех те каялла илме пултарать.

Тиражсем çулталăкра икĕ хут: апрель тата октябрь уйăхĕсенче пулаççĕ.

Вылявсен пирвайхи тиражĕ кăçалхи апрелĕн 1-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче Шупашкарта пулса иртет. Выляса илмелли вкладсем тăрăх укçа хывнă çынсем пурте тиража хутшăнаççĕ.

Счетсен кашни 1.000 номерĕ пуçне выляса илмелли вкладсем тăрăх 25 выигрыш тухать. Вăл шутра: пĕр выигрыш — выляса илекен счет çине хывнă иртнĕ çурçулхи вклад юлашкийĕн вăтам суммин 200 проценчĕ чухлĕ; 2 выигрыш — иртнĕ çурçулхи вклад юлашкийĕн 100 проценчĕ чухлĕ, 22 выигрыш—иртнĕ çурçулхи вклад юлашкийĕн 50 проценчĕ чухлĕ пулаççĕ.

Тираж таблицине хаçатсенче пичетлесе кăларнă хыççăн, районсенчи перекет кассисем выляса илнĕ укçатенкĕне вкладсем çумне хушса шутлаççĕ. Выляса илнĕ укçана кирек-хăçан та илме пулать.

Перекет кассисене выляса илмелли вкладсем тăрăх укçа хывакансен шучĕ кашни кунах ўссе пырать. Юлашки вăхăтра кăна Куславкка районĕнче 56 вкладчик хутшăннă. Пăрачкав районĕнче — 67 вкладчик, Чкаловски районра — 41 тата ытти те.

Районсемпе хуласенчи финанс активĕн ĕççыннисене çакăн çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла: ытлашши укçана перекет кассисене хывни вăл — укçа-тенкĕне тĕрĕс-тĕкĕл усрамалли чи лайăх май пулса тăрать, çавăнпа пĕрлех ĕççыннисем хăйсен укçипе тăшмана аркатса тăкас çĕрте Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ.

А. Михайлов.

Ют çĕршывсенче

ИРАН ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔ СОХЕЙЛИ КАЛАНĂ САМАХ

ТЕГЕРАН, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Иранри çĕнĕ çул ячĕпе премьер-министр Сохейли радио тăрăх сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл тулашри политика çинчен çапла каланă: «Пирĕн тулашри политика союзлă договора тĕпĕнчен пурнăçа кĕртес, хамăр союзниксемпе тата Америкăпа пĕрлешсе ĕçлес енĕпе пырать, мĕншĕн тесен çав виçĕ держава çак вăрçăра çĕнтерес тесе пĕрлешрĕç. Иран правительстви çапла шутлать: Иран ырлăхĕ совет тата Англи правительствисемпе, хамăрăн кўршĕсемпе, туслă çыхăнăва малалла тăснинче пулать. Кам та кам вăл çыхăнăва тата туслăха сиен тума хăтланать, вăл ăна Иранпа союзниксем хушшинчи туслăха тата пĕрлĕхе ăнланманнипе е усал шухăшпа çеç тума пултарать», «Пирĕн, — тенĕ Сохейли, — йышăнса илнĕ çулпа, союзниксемпе пĕрле пымалли çулпа вĕçне çитичченех каймалла. Çав çул çинчи пирĕн ĕçсен результачĕсене пĕтерме хăтланакан çынсене пирĕн тытса чармалла».

Малалла Сохейли шалти ыйтусене татса парас шутпа йышăнмалли ĕçсен планне пур енчен те шутласа тухса хатĕрлени çинчен каланă. Çав вăхăтрах, палăртнă Сохейли, Иран правительстви çĕршывра лăпкăлăх тăвассишĕн тата апат-çимĕç тăратас ĕçе лайăхлатассишĕн ĕçлет.

ТУРИ САВОЙĂРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЖЕНЕВА, мартăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцари хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Виши влаçĕсем халĕ пысăк пăлханусем пулса иртекен Клюза (Тури Савоя) çак кунсенче моторизованнăй жандармери отрячĕсем янă.

Хăй вăхăтĕнче Швейцарие тарнă французсен пысăк ушкăнĕ чикĕ урлă каçса тепĕр хут Тури Савойăна таврăннă. Чикĕре патриотсене хăйсен юлташĕсем хирĕç пулнă, вĕсене хĕçпăшал тата апат-çимĕç панă. Çавăн хыççăн вĕсем вырăнти çынсен ушкăнĕпе пĕрле каллех тусем хушшине кайнă.

ХĔВЕЛАНĂÇ НОРВЕГИРИ ЧРЕЗВЫЧАЙНĂЙ ПОЛОЖЕНИ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Ослоран пĕлтернĕ тăрăх, Рьюкан округĕнче (Хĕвеланăç Норвеги) тата Тронхейм хулинче пысăк йĕркесĕрлĕхсем пуçланса кайнă. Ĕнер Тронхеймра нимĕçсене тата Квислинга хирĕçле демонстрацисем пулса иртнĕ. Полици демонстрантсем çине пăшалпа пенĕ. Вилнисемпе аманнисем нумай.

Çав йĕркесĕрлĕхсене пула Квислинг Рьюкан округĕнче чрезвычайнăй положени туса хунă

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсен пысăк соединенийĕ Рур облаçĕнчи тĕрлĕ объектсене, вăл шутра Дуисбург хулине тапăннă.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ БЕРЛИНА ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен соединенийĕсем Берлин çине вĕçсе пырса вăйлăн тапăннă. Хула çине нумай бомбăсем пăрахнă.

Берлина çак хутĕнче тапăнни вăл çав хулана малтан тапăннисенчен чи вăйлăраххи пулнă.

Мартăн 27-мĕшĕнче Англи самолечĕсем Голландипе Çурçĕр-Хĕвеланăç Германинчи тĕрлĕ коммуникацисем çине вĕçсе пырса тапăннă.

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, тăшман вăйлăн хирĕç тăрать пулин те, 8-мĕш çарăн ĕçĕсем план тăрăх пулса пыраççĕ.

Союзниксен авиацийĕ мартăн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата мартăн 26-мĕшĕнче кăнтăрла тăшман войскисене, коммуникацийĕсене тата транспорт колоннисене атакăланă. Çапăçусенче тăшманăн 8 самолетне персе ўкернĕ.

ШВЕЦИ ПАРЛАМЕНТĔНЧЕ ШВЕЦИ НЕЙТРАЛИТЕТНЕ НИМĔÇСЕН ХĔÇПĂШАЛЛĂ САМОЛЕЧĔ ПĂСНИ ÇИНЧЕН ЫЙТНИСЕМ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонтиднинген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Швеци риксдагĕн (парламенчĕн) юлашки заседанийĕнче Германин хĕçпăшаллă самолечĕ Швеци нейтралитетне нумаях пулмасть пăсни çинчен Швецин оборона министрне Шельда хăшпĕр депутатсем ыйтусем панă пулнă. Вăл самолет Швеци чикки урлă нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене куçарнă пулнă. Çав ыйтусем çине ответ парса, оборона министрĕ Шельд çапла каланă: тĕпчесе пăхнă тăрăх, пилĕккĕмĕш çар округĕн штабĕ, Германи самолечĕ унăн территорийĕ çине ларнă пулин те, тивĕçлĕ мерăсем йышăнман. Сăмахран, самолет ăшĕнче ухтару туман, икĕ нимĕç офицерне самолетрах юлма ирĕк панă т. ыт. те.

Çавăн хыççăн сăмах илнĕ депутат Уловсон нимĕç самолечĕн командин багажне пăхманнипе, хăшпĕр нимĕç офицерĕсен аллинче хĕçпăшал хăварнипе хăй тĕлĕннине палăртнă. Нимĕçсене чикĕ патне тĕреклетнĕ район çывăхĕпе усă автомобильпех илсе кайнине те паллă тунă.

«Афтонбладет» хаçат çапла пĕлтерет: Швеци патрулĕ каланă тăрăх, вăл нимĕçсем хутсене çунтарса янине асăрхайман.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМАРТКАЙĂК

ПОЭМА

8. Тўлек те лăпкă каç

Орловăн тусĕ — Николай Гастелло.
Ăна Орлов тăван пек юратать.
Анчах та ун юлма лекет хăй тĕллĕн,
Куçать Гастелло урăх отряда.

Хăй кайнă чух вăл хăйĕн отрядне те,
Самолетне те Орлова парать.
— Шанатăп, — тет, — сана аван пĕлетĕп,
Санах пулать çак аслă аппарат.

Умра тăрать тăват моторлă улăп,
Ăна Гастелло лăпкăн ачашлать.
— Учитель, — тет Орлов, — тивлетлĕ пулăп,
Тупа тăватăп, — тет вăл чăвашла.

Гигант машинăн çўллĕ фюзеляжĕ
Çине кăвак сăрпа, ăста алпа
Кĕрнеклĕ «2» çырнă. Çампа мар-ши
Ăна кунта кашни пилот паллать!

Мухтавлă улăп — «Голубая двойка»,
Ăна çапла чĕнеççĕ отрядра.
Çамант канма вырнаçнă ăмăрткайăк пек
Вăл лăпкăн çеç асфальт çинче тăрать.

Мăнаçлă вăл,—эсир ăна курасчĕ, —
Гастелло уйрăлать кăшт хурланса.
Халь ĕнтĕ вăл — çăмăл бомбардировщик, —
Килкелĕп, тет вăл, вăхăт тупăнсан.

Унăн отрячĕ кўршĕре вырнаçнă.
Вăл—командир. Вăл час-часах унтан
Орлов патне килсе каять ир-каçăн,—
Тусĕсене манмасть-мĕн капитан.

Малалли. Поэма 61-мĕш номĕртен пичетлеме пуçланă.

Ку шăматкун каçвыртмаллах вăл юлчĕ;
Тусĕсемпе калаçмалли нумай.
Çуллахи каç тўлек те лăпкă пулчĕ.
Сăмах та шурĕ вăхăт шунă май.

Вĕсем çемçе çерем çинче выртаççĕ.
Аэродром çывăхĕнчех вĕсем.
Чўхенкелет асамлă июнь каçĕ,
Хуллен кăна çунаççĕ çăлтăрсем.

— Тусăмăрсем, тĕнче тўпи пит çўллĕ.
Мĕн чухлĕ çул вĕçевсĕн уçмалла.—
Çўле пăхса çапла калать Гастелло.
Шухăшĕпе каять вăл малалла.

Эпир, тет вăл, тин çеç-ха çунатланнă,
Пирĕн ĕçсем халь пĕтĕмпех умра.
Валерий Чкалов, тусăмсем, шутланă
Вĕçсе тухма «çĕр шарикĕ» таврă.

Тусемпе тинĕссем, пур океансем урлă —
Вĕçевсĕн çулĕ вĕçĕмсĕр инçе.
Этем телейĕшĕн çул хыв, пилот, хăюллăн,
Этем телейлĕ пултăр çĕр çинче.

Хăш чух çапла шутлан та тĕлĕнетĕн:
Мĕн ĕмĕртен сĕрте таптаннисем,
Эпир, паян çўле, çўле çĕкленнĕ,
Пире паян — мухтавпала хисеп.

Унтан Гастелло саврăнчĕ сасартăк
Орлов енне: — Чăваш ачи, кала,
Совет çĕршывĕ пулас мар-тăк,
Çак самантра ăçта эс пулмалла?

Эс халь, гигант караппала çўретĕн,
Эс çывлăшра çĕнĕ çулсем уçан.
Сан ĕмĕтсемшĕн чăрмав çук пĕрре те,
Ăçта пыратăн, эс унта хуçа.

—Эп хам та, — тет Орлов кăштах хумханнăн, —
Шутлатăп халĕ çавăн çинченех.
Эп тĕттĕм çĕрпўртрен тухса хăпарнă
Çак пархатарлă çутă тĕнчене.

Ман халăх ĕмĕр мăшкăлра таптаннă,
Юмах кăна йăпатнă халăха.
Халь ак куран, эп те çынах, тăв анăм,
Вĕçме те эп вĕçетĕп лайăхах.

— Çапла, Федот, çапла, юлташăм, тусăм, —
Гастелло тăчĕ, пăхрĕ тухăçа.
Ĕнтĕ çĕкленнĕ çутă шурăмпуçĕ,
Ĕнтĕ çут ир хăй илемне уçать.

Инçе те мар самолетсем тăраççĕ.
Тўлек те шăп аэродром çинче.
Çапла иртет июнĕн кĕске каçĕ,
Ытла тўлек пек туйăнать тĕнче.

— Çапла, Федот — тет Николай Гастелло,—
Анчах та çак телейлĕ пурнăçа
Сыхламалла. Ку вăл кашниншĕн паллă.
Тен, çакăншăн тухма лекет вăрçа.

Тăрать Гастелло. Паттăр улăп евĕр
Вăл курăнать çут шуçăм çуттинче.
Вăрçă ултавлăн килессе кĕтмесĕр
Çут тĕнчепе тăрать вăл килленсе.

Анчах хĕвел тухса ĕлкĕреймерĕ...
Кам килчĕ ку? Сасси хамăрăн мар.
Хура хĕреслĕ самолет тискеррĕн
Пуç тăрринчех пуçларĕ явăнма.

Малтан ларма хăтланнă пек кăтартрĕ,
Явăннă май кăларчĕ шаççине.
Унтан сасартăк вут тăкма пуçларĕ
Тўлек ларан самолетсем çине.

— Ниушлĕ вăрçă? Ку çăхан — разведчик?
Вĕçевçĕсем выртаççĕ çĕр çумне.
Гастелло çеç çил-тăвăл пек вĕçтерчĕ
Вут айĕнчи самолетсем патне.

Стрелок-радист кабинине вăл кĕчĕ
Хурах пек явăнан çăхан çине

Кăларса ячĕ пулемет черечĕ,
Вут тăкрĕ, печĕ лектеричченех.

Çăхан чĕтренчĕ, сывлăшра кисренчĕ,
Тарма шутларĕ, туртăнчĕ çўле.
Унтан вара вăрахăн та хуллен çеç
Çăхан шăва пуçларĕ çĕрелле.

Ун çумĕнчен ав хăпрĕ тĕксĕм михĕ,
Çав михĕ сарчĕ симĕс парашют.
— Парашютпа сикесшĕн йытă йăхĕ,
Халь-хаççĕнех ун çук мĕн вилес шут!..

Çав ирсĕр йытă пулнă мĕн разведчик.
Алла лексессĕн, допроса çитсен:
— Кăтартăр, кам мана çапса ўкерчĕ? —
Тесе вăл ыйтнă пирĕннисенчен.

Хăйне вăл питĕ сĕмсĕр тыткаланă;
Ун кантăк евĕр вилĕ куçĕсем
Хăйне ўкернĕ харсăра шыранă, —
Шартах вăл сикрĕ капитан кĕрсен.

— Эп вĕçнĕ Франци урлă, Белги çийĕн,
Эп пулнă аслă Лондон çийĕнче.
Анчах телей кўмерĕ-мĕн Россия,
Вĕçленчĕ çул пĕрремĕш кунĕнчех. —

— Çитет, фашист! — ăна Гастелло пўлчĕ.
Кантăк куçсем те шăнчĕç самантах.
Пуçланчĕ вăрçă. Пирĕн çилĕ тулчĕ.
Çĕршывăмăр пуçтаранчĕ фронта.

Орлов та çакрĕ бомба ярăм-ярăм
Тăват моторлă улăпĕ çине.
Тĕттĕм пулсан хăватлăн тухса карĕ
Тин çеç пуçланнă çапăçу хирне.

Халь Орлова сасартăк аса килчĕ
Тахçан, ыйткаласа сўренĕ чух,
Ун аллине кулак пăрахнă чул.
Хĕврех пек вăл. Ăна алла эс ил те
Тăшман пуçне пĕр шелсĕр çапса çур!

(Малалли пулать).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1287 Типография № 1. Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.